**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн**

# Шкулти пурнăç интереслĕ те пуян

Çак илемлĕ çĕр чăмăрĕ çинче кашни çыннăн хаклă вырăн пур. Çуралнă ял, юратнă шкул – нихăçан та асран каймаççĕ вĕсем.

2006-2007 вĕренӳ çулĕнче Шурча шкулĕнче 95 ача вĕренчĕ, вĕренекенсене 15 учитель пĕлӳ парать. Учительсем ачасене çирĕп пĕлӳ парас тесе нумай тăрăшаççĕ, ахальтен мар ĕнтĕ



вĕренекенсенчен çурри «4» тата «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пырать, вĕренсе тухнисенчен вара çурри ытла аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕрет. Шкулта пултаруллă учительсем нумай ĕçлеççĕ. Н.М. Тюрина чăваш чĕлхипе литература урокĕсене ертсе пырать. Вăл тăрăшнипе шкулти историпе краеведени музейĕ тĕрлĕ экспонатсемпе пуян. Шурча шкулĕнчен халь вĕренсе тухакансем те нумайăшĕ учитель ĕçне суйласа илеççĕ. Халĕ кăна институтсем пĕтерсе О.В. Иванова, Н.В. Семенова, М.Ф. Семенова, Е.Н. Гордеева, И.А. Васильева, С.Г. Шорникова, Т.В. Ермолаева, Т.Р. Студенцова тĕрлĕ шкулсенче ĕçлеме пуçларĕç. Вĕренекенсем вара татах та нумай, асăнса та пĕтерес çук. Çав вăхăтрах А.Л. Алексеев ял хуçалăх академийĕнче, О.Р. Студенцов университетра преподавательсем пулса ĕçлеççĕ, аспирантурăра вĕрентеççĕ.

Мăнаçланатпăр эпир 2007 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче республикăри ачасен общество организацийĕсемпе пĕрлешĕвĕсен фестивальне пирĕн шкулти лидерăн Ирина Саватееван та хутшăнма тӳр килнишĕн. Сăмах май каласан, районта ирттернĕ шкул организацийĕсен лидерĕсен “Моя инициатива” ятлă конкурсра пирĕн Ирина “Творчество” номинацире çĕнтерӳçĕ пулма пултарчĕ.

Аслă вожатăй Наталия Вячеславовна Борзаева тăрăшнипе тата шкулти лидер Ирина Саватеева çине тăнипе шкулта ачасен творчество пĕрлешĕвĕ йĕркеленчĕ. Хăйсене валли вĕсем “Ассорти” ят шыраса тупрĕç. Пуçланчĕ вара ĕç-пуç! Мĕн тĕрлĕ конкурссене кăна хутшăнмарăмăр пулĕ! Чи малтанах шкулта “Ассорти” ятлă хаçат кăларма тытăнтăмăр. Ку ĕçе вĕренекенсем те, вĕрентекенсем те питĕ активлă хутшăнчĕç. Ачасене сăвăсем çырма хавхалантараканĕсем Н. М. Тюрина, Р.Я. Григорьева, А.В. Павлова, Т.Ю. Тимофеева, Т.В. Андреева тата Н.В. Борзаева пулчĕç.

Шкул историйĕнче пĕрремĕш хут районти наукăпа практика конференцине хутшăнтăмăр. Пирĕн шкулти 5-мĕш класри Александр Степанов чăвашла сăвăсем çырассипе “Творчество” номинацире 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Республикăри 2-мĕш турта та лайăххисен шутĕнче пулчĕ, 3-мĕш тура Шупашкара çитсе килчĕ. Ку пирĕншĕн питĕ пысăк çитĕнӳ. Саша Степанов пек пултаруллă ачасем нумаях мар пулĕ. Вăл сăвăсемпе статьясем, калавсем питĕ нумай çырать, çав тери хитре ӳкерчĕксем тăвать. Кĕнекесем питĕ нумай вулать. Тĕрлĕрен хаçатсенче вăл – кĕтнĕ хăна (“Ассорти”, “Çĕнтерӳ ялавĕ”, “Детская газета”, “Тантăш”, “Хыçалти парта”, “Умняша”). Çитĕнсе çитсен вара вăл археолог е палеонтолог пуласшăн.

Пултаруллă Сашăсем пирĕн шкулта татах та пур. 4-мĕш класри Саша Тимофеева та асăнса хăварас килет, Раççейре тата республикăра иртекен “Чĕвĕлти чĕкеç” конкурсра вăл 1-мĕш вырăна çĕнсе илме пултарнă-çке-ха! Чăваш чĕлхине питĕ кăмăллать çак ача. Ахальтен мар ĕнтĕ пысăк çитĕнӳсем тăвать.

Эпир хутшăннă конкурссен ячĕсене пурне те каласа тухма та çук. Вĕсем пурте творчествăпа çыхăннă. Тĕрлĕрен ӳкерчĕксем, сăн ӳкерчĕксем, аппликацисем, коллажсем, сăвăсемпе статьясем, видеороликсем, проектсем, сценарисем тата ытти те. Çак ĕçе тивĕçлĕ шайра туса пыма пулăшнăшăн маларах асăннă вĕрентекенсемсĕр пуçне А.Н. Рыжкована, В.В. Бычковăна, М.Р. Ершована, П.В. Борзаева, С.Г. Вастеева питĕ пысăк тав сăмахĕ калас килет. Пирĕн çитĕнӳсене кура районта та эпир малтисен ретĕнче. Кăçалхи 2006-2007 вĕренӳ çулĕнче тунă пĕтĕмлетӳ тăрăх пирĕн шкулти ачасен “Гномы” ятлă организацийĕ 2-мĕш вырăна тухрĕ. Малашне те пирĕн малтисен ретĕнчех пуласчĕ. Çавна валли вара пирĕн шкул коллективĕн вăй-хал тата тӳсĕмлĕх тупăнсах пытăрччĕ. Çитĕнӳсем тума сĕнетпĕр пурне те!

**С. ТРОИЦКАЯ,**
**Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: тивĕçлипе мухтанатпăр эпир çĕнтерӳçĕсемпе.**

**Паянхи пурнăç ыйтăвĕсемпе**

# Вĕренĕн вĕçĕ пулатех

**«Советская Чувашия» хаçат нумаях пулмасть çырса кăтартнă тăрăх, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Игорь Моляков Арбитраж судĕнче «Волганефтьхолдинг» чикĕллĕ яваплăхлă общество представителĕ шучĕпе ку компани Цивильская тата Гагарин урамĕсем хĕреçленнĕ вырăнта туса лартнă автозаправка станцийĕпе усă курассипе вĕсен интересĕсене хӳтĕлеме тытăннă.**

Анчах çакă вăл нефть олигархĕсемпе Дельмансемпе пĕр кимĕ çине вырнаçнине пĕлтерет. Хăй вăхăтĕнче вăл




«бензоколонкăсемпе кĕрешсе» мĕн чухлĕ çулăмлă сăмах каламан-ши. Вĕсене тăвакансем тĕлĕшпе мĕнле кăна çылăх валеçмен. Хирĕç тăру транспаранчĕсемпе çавăнтах çĕр каçни те пулнă темелле. Тăруках вара пачах тепĕр майлă ӳкерчĕк. Кадрти парти çынни суда «Волганефтьхолдинга» ку объектпа усă курма чармалла мар тесе ĕнентересшĕн.

Тĕрĕссипе унăн ыттисен интересĕсене хӳтĕлесси пирки мар, лайăх мар лару-тăру аварĕнчен епле хăйĕн тасан тухасси пирки шутламалла пек. Суя сăмах сарнăшăн Молякова хăйне икĕ срок панă кăна çеç мар, унăн пулăшаканĕ А. Имендаев та çак статьяпах следстви изоляторне лекнĕ. Унччен вара хулиганла ĕçсемшĕн унччен хи депутат созывĕнчи пулăшаканĕ, национал-большевик М. Громов суд тенкелĕ çине лекнĕччĕ. Нумаях пулмасть Мускавра паллă мар лару-тăрура Моляковăн тепĕр пулăшаканне А. Левина персе вĕлернĕ. «Коммерсант» хаçатра çырнă тăрăх, Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин йĕркеленнĕ преступноçпа кĕрешекен управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Юрий Федотов çапла пĕлтернĕ: «Анатолий Левин Шупашкарти криминаллă ушкăнсенче паллă çын шутланнă. Вăл Шупашкарти Çĕнĕ Кăнтăр районĕнче пуç пулса тăрассишĕн кĕрешекен преступниксен ушкăнĕн активлă членĕ пулнă. Левин гражданина темиçе хутчен те право сыхлавĕн органĕсем тытса чарнă. Вăл шутра хĕç-пăшал тата çар хатĕрĕсем тытса усранишĕн те. Ăна персе пăрахни те бандитсем хушшинчи хирĕç тăрупа çыхăннă».

Çак кунсенче Моляков КПРФ ретĕнчен тухассине пĕлтернĕ. «Парти пуçĕнче тăракансем калана сăмахсемпе чĕнсе каланисем тата конкретлă ĕçсем хушшинче пысăк чикĕ пур, вăл лару-тăрăва тĕпрен улăштарма пултараймасть,– çырать вăл. – КПРФ пуçĕнче тăракансем çынсен интересĕсене татса парассине мар, харпăр хăйсен интересĕсене малти вырăна хураççĕ».

КПРФ Чăваш рескомĕн секретарĕ Д. Евсеев «Регнум» агентство урлă çапла пĕлтернĕ: «Мĕн пулса иртет ун йĕри-тавра?.. Тен ун тĕлĕшпе такамăн компромат пур... Япăх мар укçа тӳлесе урăх парти списокĕпе суйланма сĕннĕ пулĕ». Сутăнчăксен хăш партине суйласа илĕ-ши ку хутĕнче Моляков?

**ХАМĂР ИНФ.**

**“Радиохум – хаçат страницинче. Халăх тата влаç: тĕллевсем пĕр пек, ĕçсем те пĕрлех”**

# Тĕл пулусене вырăнсенче кĕтеççĕ

**Районта вырма вăй илсех пырать. Çакăн пек хĕрӳ вăхăтра ял çыннин хăйне хумхантаракан ыйтусемпе район центрне тивĕçлĕ органсене кайма вăхăт та çук. Тепĕр чух алла хаçат-журнал илме те вăхăт тупма хĕнтерех. Çапла майпа вăл е ку хыпара пĕлмесĕр юлма та пулать. Чуна канăç паман ыйтусем вара пирĕн вăхăт çуккине пăхса тăмаççĕ. Вĕсене вăхăтра палăртса çийĕнчех татса панине мĕн çиттĕр? Çак тĕллевпе ĕнтĕ районта хĕрӳ тапхăр вăхăтĕнче информаципе художество ушкăнĕсем йĕркеленĕ. Унта район администрацийĕн тĕрлĕ пай ĕçченĕсемсĕр пуçне депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем, “Россельхозбанк”, шалти ĕçсен пайĕн, медицина учрежденийĕсен ĕçченĕсем те кĕреççĕ. Вырăнсенчи культура ĕçченĕсем вара ял ĕçченĕсене юрă-ташăпа савăнтараççĕ.**

**Информаци ушкăнĕсем хăйсен ĕçне иртнĕ эрнере пуçларĕç, виçĕ хуçалăхра пулчĕç.**

**ПĔЛМЕЛЛИ ЧĂНАХ НУМАЙ ИККЕН**

Çак тунти кун вара вĕсенчен пĕр ушкăнĕ Катькас ял тăрăхĕнче пулчĕ. Муркашри чăх-чĕп фабрикин коллективĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнипе пĕрлех унта ĕçлекенсене хумхантаракан ыйтусем çине хуравларĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – социаллă аталану пайĕн ертӳçи А. Е. Андреева тĕл пулу тĕллевĕпе паллаштарнипе пĕрлех информаци ушкăнĕнче камсем пурри пирки пĕлтерсен пĕр иккĕленӳ те юлмарĕ: канăç паман ыйтусен хуравĕсене халех пĕлме пулать. Тĕслĕхрен, килти хушма хуçалăха аталантарма илекен ăна тӳлесе татмалли вăхăт çитиччен 65 çул тултарать пулсан, мĕн тумалла? “Россельхозбанкăн” Муркашри филиалĕн управляющийĕ И. В. Павлова ку ыйтăва та уçăмлăх кĕртрĕ: кун пек чухне кредит илекен пенсионерпа пĕрле пурăнакансем те созаемщиксем пулса тăраççĕ иккен.

Килти хушма хуçалăха аталантарма илекен çăмăллатнă кредита 300 пин тенкĕ таран илесси вырăнтах татăлать пулсан, унтан пысăкрах сумма илес текенсен ыйтăвне асăннă банкăн республикăри уйрăмĕнче татса параççĕ. Кун пек чухне поручительсем пулнипе пĕрлех кредит илекенĕн пурлăха саклата хывма тивет. Кун йышшисем хальлĕхе 4-ăн районта. Ытларах 300 пин тенкĕне çитиччен илеççĕ патшалăх çăмăллăхне. Ирина Валентиновна калаçăвĕнчен залра ларакансем 5 çуллăха паракан çăмăллатнă кредита районта пурăнакансем ытларах выльăх витисемпе сарайĕсене, çĕр çинче ĕçлемелли техника туянма илни паллă пулчĕ.

Кăçалтан пуçласа уйăхсерен ачашăн паракан пособи виçисем те улшăнчĕç. Вăл мĕнле пуласси халĕ çемьери ачасем миçе тата вĕсем миçе çулта пулнинчен килет. Ачана çулталăк çурăччен пăхма паракан пособи калăпăшĕ те палăрмаллах хăпарчĕ. Пĕрремĕш ачашăн вăл 1,5 пин, иккĕмĕш тата малаллахи ачасемшĕн 3 пин тенкĕрен кая мар. ЧР Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н. П. Петрова çак ыйтусемпе калаçнипе пĕрлех ачасене ача садне çӳретнĕшĕн тӳлекен тӳлевĕн пĕр пайне каялла таварса пани çинче те тĕплĕн чарăнчĕ. Ĕç ветеранĕсен мĕнле çăмăллăхсем тата çак ята камсем тивĕçеççĕ? Ку ыйту çине те туллин хуравларĕ Нина Пантелеевна.

Тĕл пулура чăх-чĕп фабрикинче ĕçлекенсем çак уйрăмлăх пирки те пĕлчĕç. Донорсем хăйсен çăмăллăхĕсемпе усă курнипе пĕрлех ытти çăмăллăхсемпе те усă курма пултараççĕ. Федераллă тата регион шайĕнчи çăмăллăхсемпе усă куракансен хăйсене тивĕçекен çăмăллăхсенчен пĕрне суйласа илмелле.

Ачан ашшĕ е амăшĕ ĕçсĕр. Уйăхсерен ачашăн паракан пособие параççĕ-и? Ку ыйту та паян нумайăшне хумхантарать.

– Ашшĕ е амăшĕ ĕçлемесен те ача укçине паратпăр. ЧР Правительстви халăх майлă тунă тепĕр утăм ку. Кăçалхи май уйăхĕнчен пуçласа пурнăçа кĕчĕ ку çăмăллăх. Енчен те ачан ашшĕ е амăшĕ аякка ниçта та ĕçлеме каймасть пулсан, хăй пурăнакан территорире ĕç вырăнĕ тупаймасть пулсан (ял тăрăхĕнчен çакна çирĕплетсе справка парсан), ача укçине параççĕ, – пулчĕ Нина Пантелеевнан хуравĕ.

Паян ачана çемьене пурăнма илсе те ĕç укçиллĕ пулма пулать. Çапла майпа тăван çын ăшшисĕр юлнă ачана ашшĕ-амăш юратăвне панипе пĕрлех ĕç те тупатăн хăвна валли. Патшалăх вара ку енĕпе те пысăк пулăшу парать. Пĕр е икĕ ачана пурăнма илсен, ĕç укçи 2500 тенкĕпе, 3 е ытларах ача усрама илсен, 3600 тенкĕпе танлашать. Кунсăр пуçне ача çуралсан паракан пĕр хутчен паракан пособие те, çавăн пекех ачана çитерме, тумтир-пушмак, çемçе хатĕр илсе пама уйăракан пособие парать патшалăх ачана пурăнма илнĕ çемьесене. Хальлĕхе пирĕн районта кун пек çемьесем 4.

Нина Пантелеевна çавăн пекех соцпакета çитес çултан укçан илес текенсен РФ ПФ Муркаш районĕнчи уйрăмне çакăн пирки октябрĕн 1-мĕшĕччен заявлени памалли пирки те аса илтерчĕ. Пĕчĕк пенси илекен пĕччен ватăсене те пулăшу параççĕ вĕсен пурнăç условийĕсене вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн.

Тĕл пулура Нина Пантелеевна граждансен харпăр хăй ыйтăвĕсене те хуравларĕ.

**ЫЙТУСЕМ ЧЫЛАЙ ПУЛЧĔÇ**

Ытларах çынна пырса тивекен вырăнти проблемăсем вара залри калаçу вăхăтĕнчех тухрĕç. Хăйсем ĕçлекен предприятипе çыхăннăскерсем мар вĕсем. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Н. Г. Ванеркин (тĕл пулура вăл хăй те пулчĕ) ертсе пыракан предприяти паян районта çеç мар, республикăра та ырă ятлă. Кунти ĕç-хĕлпе питĕ кăмăллă коллектив.

Ытти ял тăрăхĕсенчи пекех, шыв проблеми ку ял тăрăхĕнче те пур иккен. Çакăн сăлтавĕ те паллă. Шыв пăрăхĕсем кивелсех пыраççĕ пур çĕрте те. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхсем ку енĕпе хăйсенчен килнине йăлт тăваççĕ.

– Шыв башни юхса ларать. Хăçан юсаççĕ?

Ку ыйту çине “Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх” МУП тĕп инженерĕ В. В. Петровский çапла хуравларĕ:

– Çак эрнере килсе пăхатпăр, мĕн тумаллине палăртатпăр. Черетпе юсатпăр-çке кăлтăксене. Ку таранччен Калайкассинче, Мăн Хураçкара, Юнкăра шыв ыйтăвĕпе ĕçлерĕмĕр.

– Пирĕн поселокра шыв час-час пулмасть. Мĕншĕн ман шывпа усă курнăшăн тӳлемелле? – илтĕнчĕ сасă залран.

Тĕп инженер хуравĕнчен ку тăрăхра пурăнакансем те, ытти çĕрти пекех, хăйсем çинчен маларах шутлани курăнать:

– Анатарах пурăнакансен пахчинче кунĕн-çĕрĕн шыв юхать, тăваллараx пурăнакансен çавна май шывсăр шар курса пурăнас пулать. Кăçал шăрăх пулнăран ахаль те çĕр айĕнчи шыв “тарса” пырать. Шывне нормăран ытларах илни насуссене пушшех те шывсăр, пушă çĕрте ĕçлеттерессипатне илсе пырать.

Эпир вара кун пирки те, кӳршĕ урамсем шывсăр антăхасси пирки те шутламастпăр, пирĕншĕн пулсан, хамăр пахчара çимĕç йĕркеллĕ çитĕнтĕр. Ытти вара ик айкки те – тăвайкки. Çакна кунти тепĕр çитменлĕх те çирĕплетсе парать. Канализаци шывĕ ятарласа вырнаçтарнă савăтран каçса кайсах çырманалла юхать – канализаци системипе усă куракансене ку хумхантармасть: хальлĕхе нимĕн те пулман вĕт-ха хăрушши. Апла пулсан ку енĕпе татăклă тивĕçлĕ йышăну тумах тивет.

Кунта манăн çак тĕл пулура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов каланă сăмахсене илсе кăтартас килет. Пухăннисене районăн ку таранччене утăмĕсемпе паллаштарнă май çакна палăртрĕ вăл:

– Çитĕнӳсем пур, анчах тумаллисем татах та нумайрах. Ытти отраслĕсенче курăмлă утăмсем куç умĕнчех пулсассăн, ял хуçалăхĕ йывăр лару-тăрура. Ял хуçалăхĕнче кадрсен проблеми çивĕч тăрать. “Передовик” “Чемеево”, “Лидер”, “Хлебороб”, “Волга” хуçалăхсенче дояркăсем çитмеççĕ. Ытларах такам туса парасса кĕтме хăнăхмарăмăр-ши? Айтăр-ха, çавна тăватпăр, çапла тăватпăр текенсем çук. Ма туса памастăр текенсем нумайланса пыраççĕ.

Юрий Александровичăн çак шухăшĕ çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсемпе те пĕр килет. Е тата Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Г. Лебедев калана тĕслĕхе илер. Шомикра пурăнакансенчен хăшĕсем тислĕк куписене асфальт çине кăларса хураççĕ иккен. Вĕсемшĕн пулсан, кил хушшине тирпейлесе пултăр. Хамăр вара ялсен тирпей-илемĕ çинчен калаçатпăр. Камсен тумалла ăна? Ялта пурăнакансен. Çакна кунта пурте ăша хывайман иккен-ха.

Вырăнтах вырăнти влаçпа пĕрле татса памалли ыйтусене пĕрлех татса памалла пек. Тĕл пулура ку тăрăхра пурăнакансем шыв укçине вăхăтра тӳлейместпĕр тесе пăшăрханчĕç. Уйăх иртмессерен сумми те пысăклансах каять, тӳлеме кансĕртерех пулма пултарать.

–Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн пĕр специалисчĕ пур яла та пĕр харăс çитсе ĕлкĕреймест. Тен, тепĕр çын хушса параççĕ, – терĕç тĕл пулура.

Ку ыйтăва ытти хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче тепĕр штат илмесĕрех татса панă. Шывшăн укçа пуçтаракан специалист ял тăрăхĕн администрацийĕнче йышăнать тӳлевсене. Çапла майпа пурте вăхăтра тӳлеме пултараççĕ. Халиччен татăлайман çак проблемăна ял тăрăхĕн пуçлăхĕ шăпах халь асăннă пек татса пама пуласси пирки каларĕ.

Халăха канăç паман ыйтусем ку тăрăхра татах та пур. Анчах та пурне те пĕр харăс татса пама кансĕртерех-çке.

– Катькасри врач амбулаторине кăçал йĕркелесе яраймарăмăр. Юсаса пĕтеретпĕрех ăна, – терĕ Юрий Александрович. – Калайкасси шкулĕн çивиттийĕ юхнипе ăна юсасах пулать.

Укçа-тенкĕ çитменнипех хальлĕхе Ярак клубĕпе ыйту пĕтĕмпех татăлса пĕтеймен. Районта çĕнĕрен витмелли Культура çурчĕсем те пур.

Вырăнта татăлайман ыйтусене укçа-тенкĕ çитнĕ таран татса парас тесе тимлет район администрацийĕ. Анчах та вырăнтах татса пама май пур ыйтусене вăраха яни вара килĕшӳллех мар пулĕ. Кунта ял тăрăхĕн администрацийĕпе ялсенче пурăнакансен пĕр тĕллевпе ĕçлени кирлĕ. Тăвас ĕçе пĕрле туни. Çавăнпа та тĕл пулура хускатнă хуçасăр юлнă трансформатор ыйтăвне татса парас тесе малтанхи утăмсене вырăнта васкаварлăрах тумалла.

– Аялти пĕвене пĕвелеме тăпра çитмест. Çавăнпа та хальлĕхе тепĕр урампа çӳресен аван пулмалла. Ярак клубне бюджет укçипе туса пĕтеретпĕрех. Шатракасси клубне юсама тепĕр 50 пин каять. Йывăç касакансене те хăйсем хыççăн тирпейлеттеретпĕрех. – Тĕл пулура хускатнă ыйтусем çине хурав панă май палăртрĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Г. Лебедев.

–Шкул автобусĕ пĕрре кăна. Вăл 5 маршрутпа çӳрет. Шомика кĕмест вăл. Виçĕ ялтан ачасем çуран тухаççĕ. Автобус каялла та леçсе хăвармасть.

–Тĕрлĕ налука мĕншĕн малтанхи пек ял тăрăхĕнчех тӳлемелле мар. Çав 3-4 тенкĕне тӳлеме кайса çул укçи 40-50 тенкĕ тухса каять. Çитменнине ĕçрен отгул илсе кайма тивет Муркаша.

**Асăрхатăр пулĕ, ыйтусем тухсах тăраççĕ. Вĕсене тĕрлĕ шайра татса пама тивет. Апла пулсан вăхăт та ытларах кирлĕ пулать.**

**Тĕл пулуран вара çакă курăнчĕ: халăх кĕтет çакнашкал тĕл пулусене.**

**–Тепрехинче кун пек тĕл пулу пуласси çинчен маларахах пĕлтерӳ çаксан аванччĕ, – çак сăмахсемпе пурте хăйсен ĕç вырăнне саланчĕç.**

**Л. ТУКТИНА.**